Раççей – пирĕн Тăван çĕр-шыв

# ПАТРИОТ

**Патриотизмла воспитани ыйтăвĕсемпе уйăхсерен тухакан кăларăм**

# Çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе!

***Умри кану кунĕсенче эпир пурсăмăр та пĕрле çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунне паллă тăватпăр. Кам-ха вăл паянхи Çĕр-шыв хӳтĕлевçи? Вĕсен йышне паян-ыран тăмалли яшсемпе хĕрсен мĕне тĕпе хумалла? Пĕлетпĕр-и эпир хамăр хӳтĕлевçĕсен паттăрлăхне? Çак ыйтусем тавра йĕркелерĕмĕр эпир хамăрăн паянхи кăларăма.***

**Салтак паттăрлăхĕ асран тухмĕ**

## «Сире хӳтĕлеме хам юлатăп!»

Салтаксен взвочĕ тусем хушшипе иртекен çула сыхлама приказ илчĕ. 18-20 çулсенчи 30 салтак тата тинтерех кăна çар училищинчен пĕлӳ илсе тухнă аслă лейтенант сăрт-ту хушăкĕсемпе хушнă вырăна çитрĕç. Улăхçаранлă вырăнта çуралса ўснĕ каччăсемшĕн вăрçă пыракан Афганистанри кашни сăрт хысакех хăрушлăх кăларса тăратать. Анчах çĕр-шыв хушнă-тăк, унăн интересĕсене хӳтĕлемеллех, приказа пурнăçламаллах. Çав интересенче хăвăн аçу-аннӳн тата выляса ўснĕ тăван ялăн е хула урамĕн шăпи те пурах-тăр. Апла пулсан сан çурăму хыçĕнче – хăвна пурнăç панă Тăван çĕр-шыв. Афганистан Республикинче çулталăка яхăн службăра тăракан Коля çак шухăшсемпе автомата малалла хурса пысăк чул хыçне выртрĕ. Кӳршĕре вырнаçнă Саша салтак аттине хывса урана уçăлтарма ларчĕ. Мишăпа Юра вара ĕнер килтен илнĕ çырусене вулама пуçларĕç. Кăшт инçетререхре юлташсалтаксен савăк шўчĕ янăраса кайрĕ.



**Районти интернационалист-салтаксен канашĕн ертӳçи В. Киршев, Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А. Прокопьев, район ертӳçи Ю. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Данилов.**

Йăлтах йĕркеллĕ. Хăрушлăха систерекен пĕр паллă та çук. Сенкер тӳпе те тăван ялти пекех, ăшă çил те укăлча хыçĕнчи хирти майлах.

– Алеша, çывăхри тӳпемрен тавралăха сăнама ан ман! Асăрханулăх пăсмĕ! – хушрĕ взвод командирĕ П. Николаев аслă лейтенант.

Асăрханулăх пирки вара кунта никама та аса илтерме кирлĕ мар. Туслă взвод пĕр çар заданийĕнче çеç мар пулнă. Кашнинчех приказа ăнăçлă пурнăçланă.

... Душмансем те çывăрмаççĕ иккен. Хăйсен разведки урлă вĕсем совет салтакĕсем çак плацдарма маларах çитнине пĕлчĕç ĕнтĕ. Халĕ вĕсене хăваласа ямалла та наркотиксен караванне çул уçмалла. Хăйсене сăрт-ту хушăкĕсенче килти пекех туяканскерсем совет салтакĕсем вырнаçнă вырăна систермесĕртерех çывхарма пултарчĕç, анчах малалла уçă вырăн. Çӳллĕ тĕм çинче совет салтакĕ хуралта выртать...

... Гранатомет пенĕ сасă шăплăха сирсе ячĕ. Хуралсалтак выртнă çĕрте чуллă çĕр сывлăша çĕкленчĕ. Çавăнпа пĕрлех пирĕн салтаксем çине тăхлан çумăр çума пуçларĕ. Алексея пулăшма çĕкленнĕ Саша та юлташĕсем умне ўкрĕ. Коля сăрт хушăкĕпе пăхсан хăйсем енне душмансен йышлă ушкăнĕ çывхарнине асăрхарĕ. Пирĕн салтаксем хирĕç пеме пуçлани те тăшмана тӳрех пуç устармарĕ. Вĕсем совет салтакĕсем вырнаçнă сăрта хупăрлама шутлаççĕ имĕш. Тăшманăн çак планне чармалла. Йывăр çапăçу пуçланни пирки хамăрннисем патне пĕлтермелле! Çакăн пирки взвод командирĕ çыхăнуçă-салтака пĕлтерчĕ çеç, ун тĕлĕнче те граната çурăлчĕ. Леня вара пулăшу кирли пирки çинеçинех эфира пĕлтерӳ ячĕ. Çапăçу вара хĕрсех пычĕ. Çухатусем те нумайланчĕç. Пирĕн салтаксем татти-сыпписĕр пенине пăхмасăрах тăшмансен йышĕ сахалланни питех палăрмарĕ. Командир пуç хунине кура ертӳçĕ тилхепине алла илнĕ отделени командирĕ Коля çухалса каймарĕ. Хыçалалла пăхрĕ те сăрт тепĕр енче тăван батальон салтакĕсене асăрхарĕ. Вĕсем çитĕç, анчах пурте кунта юлсан çухатусем те йышланĕç.

– Сывă юлнисем, итлĕр манăн приказа! Пурсăра та каялла чакма приказ паратăп! Сире хӳтĕлеме хам юлатăп! Комбата калăр, караван ирteймен! – терĕ те отделени командирĕ, пулемет умне выртрĕ.

Пĕр черет, тепĕр черет... Душмансем пирĕн взвода хупăрласа илесси пулмарĕ. Коля каялла çаврăнса пăхрĕ те взвод тепĕр сăрт хыçнелле кайни курăнчĕ. Çав самантра пирĕн вертолетсем те сăрт хыçĕнчен курăнса кайрĕç, анчах пулăшу каярах юлчĕ. Çывăха çитнĕ душманăн автомат черечĕ юлташĕсене сыхласа пĕр утăм та каялла чакман Коля сержантăн чĕрине тапма чарчĕ...





**Инçетри сăртлă-туллă çĕр-шывра пуç хунисем яланах пирĕн асра.**



**«Афганистан вăрçин ветеранĕсен канашĕ» обществăлла организацин председателĕ Е. Чернов паян та хастар афганецсене саламланă самант.**

Патшалăх заданине пурнăçласа тăванĕсем умĕнче пит хĕретмесĕр саккăррăн выртса юлчĕç вĕсем çав çапăçу хирĕнче...

Кăçалхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсене Афганистан Республикинчен кăларнăранпа 20 çул çитрĕ. Пирĕн çĕр-шыври вуншар пин салтакпа офицер хутшăннă унти çапăçусене. 13,5 пин çĕр-шыв приказне пурнăçласа пуçĕсене хунă. Вĕсен шутĕнче пирĕн районтан 7 яш: Н. Ю. Михеев рядовой, Н. А. Перцев сержант, А. Н. Порфирьев рядовой, М. М. Самойлов рядовой, Ю. П. Тарасов сержант, А. М. Татаров сержант (вĕсене пурне те вилнĕ хыççăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă) тата МИ-8 вертолетăн летчик-штурманĕ В. П. Николаев аслă лейтенант (вилнĕ хыççăн Çарти Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă).

Иртнĕ шăмат кун, февралĕн 14-мĕшĕнче, районти интернационалист-салтаксем Москакассинче Афганистанри вăрçăра пуç хунă 7 ентеше халалласа лартнă палăк умĕнче пухăнчĕç. Пухăннисем хушшинче афганецсемпе вĕсен мăшăрĕсем, район ертӳçисем, шкул ачисем, Афганистанра пуç хунисен амăшĕсем пулчĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

**Конкурс**

## Пушартан сыхланăр!

Лăпкă вырăнта пурăнатпăр пулин те, пирĕнтен кашнинех вăл е ку асăрханусăрлăхпа тимлĕхе çухатнине пула тата çынсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманнине, вĕсене сĕмсĕррĕн пăснине кура «хĕрлĕ автан» хăратса-шиклентерсе тăрать. Хĕл сиввисем иртсех кайманнине шута илсе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра ĕçлекенсен ял çыннисемпе пушар хăрушсăрлăхĕпе ăнлантару ĕçĕсем ирттерессине, пурăнмалли çуртсемпе çынсем нумай пухăнакан вырăнсенче хăй тĕллĕн тунă электрокăмакасемпе усă курма чарассине, тăнăç мар тата эрех нумай ĕçекен çемьесене, пĕччен пурăнакан ватăсемпе инвалидсене уйрăм шута илессине, ведомствăлла пушар хуралĕ тытакансен техника юсавли çине тимлĕх уйăрассине чакармалла мар.

Çын пуласси ачаран паллă тенине шута илсе ачасемпе çамрăксем хушшинче пушар хăрушсăрлăх вĕрентĕвне анлăлатас тĕллевпе район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕ тата районти 37-мĕш пушар чаçĕпе патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ сăвă конкурсĕ ирттерет. Ăна РФ пушар хуралĕн кунне (ака уйăхĕн 30-мĕшĕ) халалланă. Конкурс пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен пырĕ. Унта хутшăнас текенсен хăйсен хайлавĕсене асăннă тапхăрта Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçне тăратмалла. Çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ. Çĕнтерӳçĕ-сăвăсем район хаçатĕнче кун çути курĕç.

**О. АЛЕКСАНДРОВА,**
**пушар чаçĕн профилактика инструкторĕ.**

**Шалти ĕçсен пайĕнче**

## Саккунпа çынлăх малта пулччăр

Патриотла туйăма кашни çынрах пĕчĕк чухне вăратса аталантарса пымалла. Çитĕнсен те ăна сӳнме памалла мар. Çапла тăвас тесех ĕнтĕ иртнĕ кунсенче Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайĕнче Афган вăрçинче тата ытти хăш-пĕр хĕрӳ вырăнсенче пулнă ентешсемпе тĕл пулу ирттерчĕç.

Б.Н. Михайлов подполковник, паян шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан К.И. Петров, О.Н. Потряков, В.К. Леонидов опердежурнăй тата районти воин-интернационалистсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи В.В. Киршев хăйсен аса илĕвĕсемпе пакунлисем умĕнче тухса каласрĕç. Каласу вара пĕр енлĕн иртмерĕ. Ыйтусем нумай пулчĕç. Уйрăмах çамрăксемшĕн çак тĕл пулу интереслĕ пулни палăрчĕ. Хăнасем çапăçусем вăхăтне кăна мар, ют çĕр-шыври çынсен пурнăç условийĕсем, культури епле пулнине те манмаççĕ иккен. Тăван çĕр-шывăн приказне пурнăçланипе пĕрлех пирĕн ентешсем нихăçан та çынлăх туйăмне çухатса çапăçман. Çын тата саккун хушшинче вĕсен варрине тупма пĕлнĕ.

Шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.Д. Макаров çак кăсăклă тĕл пулу çав хушăрах милици сотрудникĕсемшĕн, уйрăмах çамрăккисемшĕн, усăллă пулнине каларĕ. Çакнашкал патриотла воспитани паракан тата саккунпа çынлăха малти вырăна лартма вĕрентекен тĕл пулусем вара пакунлисен малашне та сахал мар иртĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Фашистла Германие çапса аркатнăранпа 64 çул çитнĕ май**

## Аслă Çĕнтерӳре Муркашсен тӳпи те пĕчĕк мар

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен чăваш халăхĕ те айккинче юлман. Вăл шутра – Муркашсем те. Пирĕн 5 ентеш – Григорий Алексеевич Алексеев, Яков Анисимович Анисимов, Борис Михайлович Васильев, Алексей Иванович Воробьев, Илья Григорьевич Мешаков – хаяр çапăçусенче Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ, Александр Артемьевич Быков вара Мухтав орденĕн виçĕ степень кавалерĕ пулса тăнă.

1944 çулччен пулнă Сĕнтĕр район çыннисем (çав çулхи февралĕн 10-мĕшĕнчеnпе Муркаш районĕ) тылра та хастарлăхпа палăрсах тăнă. Вăрçăран аманса таврăннă салтаксем фашистсен ирсĕрлĕхĕ пирки каласа пани ĕç çыннисен çиллине çĕкленĕ те вĕсем фронта пулăшассипе ытларах тăрăшма пуçланă. Акă Кивĕ Матьăкри «Ударник» колхоза фронтран аманса таврăннă Платонов çав вăхăтра республикăра «Чăваш колхозникĕ» танк колонни тума пуçтарнă пĕрлехи кассăна 3000 тенкĕ укçа панă. Çак ырă пуçарăва тĕслĕхе илсе колхозниксем пурĕ 100000 тенкĕ укçа пухнă.

Фронта пулăшасран трактористсемпе комбайнерсем те юлман. Сĕнтĕрти МТСри трактор бригадисен бригадирĕсем М. Петров 15000 тенкĕ, И. Андреев 10000 тенкĕ парса пулăшнă.

Сĕнтĕр районĕ пирки хаçатра та ырăпа кăна асăннă.

«Январĕн 12-мĕшĕ тĕлне «Чăваш колхозникĕ» танк колонни тума 1565000 тенкĕ, «Чăваш тракторисчĕ» танк колонни валли 83000 тенкĕ укçа пухăннă», – тесе çырнă 1942 çулхи январĕн 13-мĕшĕнче. Çак çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче хаçатсем Сĕнтĕр районĕ «Чăваш колхозникĕ» танк колонни валли татах 91440 тенкĕ, «Гигант» колхоз председателĕ Яким Петрович Бабушкин 25000 тенкĕ, «Новый путь» хуçалăх ертӳçи Гаврилов, колхоз счетовочĕ Ванюшев, «Марксист» колхоз колхозникĕ Воронов тата ыттисем те 12-шер пăт тырă панине хыпарланă.

**Сĕнтĕр. 1943 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕ.**

«Свобода» колхоз членĕсем – вăрçă участникĕсем – Каплин 6 пăт тата Яриков 3 пăт тырă панă. Фронтовиксен пуçарăвне малалла тăсса колхоз председателĕ Петровский тата 2 фронтовикăн ашшĕ 60 çулхи Семенов колхозник 12-шер пăт çăкăр патшалăх пӳлмине панă. Колхозĕпе пурĕ – 450 пăт.

**Сĕнтĕр. 1943 çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕ.**

Фронта пулăшас ĕç тылра вăй илсех пырать. «Гигант» хуçалăхра тырă пухасси те, укçа пуçтарасси те çӳллĕ шайра. «Манăн мăшăра гитлеровецсем вĕлерчĕç. Манăн тӳпе Хĕрлĕ Çар салтакĕсем валли пултăр. Вĕсем мăшăршăн фашиста тавăрччăр», – тет Марфа Васильевна Степанова.

Тылри пулăшу вăрçă вĕçлениччченех пынă.

**Р. СЕДАТЛОВА.**